# Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ палӑртнӑ Наци проектӗнчен пӗри – вӗрентӳ

## Муркаш лицейӗ 10 ҫулта

**КӖСКЕ ИСТОРИ. «Муркаш лицейӗ» муниципаллӑ вӗрентӳ учрежденийӗ Чӑваш Республикинчи Вӗрентӳпе ҫамрӑксен политикин министерствипе Муркаш район администрацийӗ тата И. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗ пӗр шухӑшлӑ пулнипе 1999 ҫулта уҫӑлчӗ. Паян вӑл хӑйӗн пӗчӗк юбилейне паллӑ тӑвать – вунӑ ҫул. Истори страницисем хулӑнах мар пулин те, кунта вӗренекенсемпе ӗҫлекенсем унӑн кашни пайнех ылтӑнмерчен упранӑ пек упраҫҫӗ. Иртнине пӗлмесӗр малашлӑх ҫук – ҫак тӗллев кунта вӗреннӗ тата паян вӗренекен кашни лицеистӑн тӗллевӗ. Вунӑ ҫул хушшинче Муркаш лицейӗнчен 485 яшпа хӗр тарӑн пӗлӳ илсе тухса пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑнӑ. Вӗсенчен 46-шӗ лицее медальсемпе вӗҫленӗ. Пӗрлехи тӑрӑшулӑхпа лицей 2006 ҫулта Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗн грантне (пӗр миллион тенкӗ) тивӗҫрӗ. Унта инноваци тата эксперимент ӗҫнехӗлне, вӗрентӳ пахалӑхӗн кӑтартӑвӗсене шута илнӗ.**

*«Муркаш лицейӗ» муниципаллӑ вӗрентӳ учрежденийӗнче ӗҫлекенсемпе лицеистсем тата кунта вӗренекенсен ашшӗ-амӑшӗсем!*

*Паян тарӑн пӗлӳ – ҫирӗп пурнӑҫ никӗсӗ. Ҫакна ҫамрӑклах ӑша хывакансем ҫӗршывӑн шанчӑкӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсене тивӗҫлӗ пӗлӳ парассипе ырми-канми тӑрӑшакансем – малашлӑха ҫул кӑтартакансем. Сире пурсӑра та хӑвӑр суйласа илнӗ ҫулпа ҫирӗппӗн утма ырлӑх-сывлӑх, телей, ӑнӑҫу сунатӑп.*

**З. ДИПЛОМАТОВА,**
**район администрацийӗн вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗн пуҫлӑхӗ.**

## Пурнӑҫран айккинче тӑмастпӑр



Вӑхӑт урапи хӑвӑрт кусать. Анчахрах уҫӑлнӑ Муркаш лицейӗ те вунӑ ҫул тултарчӗ. 10 ҫул вӑл 10 кун мар пулин те, пирӗншӗн унӑн кашни сехечӗ – ӗнерхи пекех – яланах асра. Районта пуҫӑнакансем пирӗн вӗрентӳ учрежденийӗ 1999 ҫулта уҫӑлнине лайӑх астӑваҫҫӗ. Унтанпа чылай яшкӗрӗм вӗренсе тухрӗ кунтан, лицей нумай ашшӗ-амӑшӗн тимлӗхне пӗр чӑмӑра пуҫтарчӗ.

Мӗнле пурӑнать-ха паянхи лицей? Мӗнле енсемпе ӗҫлесе пыратпӑр? Мӗн ҫӗннине алла илессишӗн тимлетпӗр? Пирӗн ҫуралнӑ кун умӗн ҫак ыйтусем нумайӑшне канӑҫ памаҫҫӗ пулӗ. Ҫавӑнпа та вӗсем ҫинче паян тӗплӗн чарӑнса тӑрар.

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю. Иванов пулӑшнипе Муркаш лицейӗ паян тӗрлӗ енпе ӗҫлесе пырать. Пӗрремӗшӗ – вӗрентӳ процесне индивидуализацилессине тӗпе хуни. Ҫакӑ кунта вӗренекен кашни ачана тивӗҫтерни палӑрать. Пирӗн условисенче ача хӑйне валли кирлӗ вӗренӳ планне хӑй хатӗрлет. Ӑна тума ача пурнӑҫра хӑш профессие суйласа илессе, хӑш предмета тарӑнрах вӗренни ӑна малашлӑхра кирлӗ пуласса, вӑл мӗнле спецкурса ҫӳрес кӑмӑллине шута илетпӗр. Вӗрентӳ расписанине те ҫавна тӗпе хурса хатӗрлетпӗр: кашни лицеист хӑйӗн профиллӗ предметне суйласа илсе ҫав профиллӗ ушкӑнсенче вӗренме пултарать. Ҫапла вара ачасем лицейра тӗп курссене вӗреннипе пӗрлех профиллӗ предметсене те тарӑннӑн алла илеҫҫӗ. Ҫакӑн результачӗ те куҫ умӗнчех: иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче кӑна лицейран вӗренсе тухнӑ 49 ҫамрӑкран 41-шӗ республикӑри тата Раҫҫейри аслӑ вӗрентӳ заведенийӗсене бюджет вырӑнӗсене тӳлевсӗр вӗренме кӗчӗ.

Пирӗн патӑмӑрта юлашки ҫулсенче вӑй илнӗ тепӗр вӗрентӳ енӗ вӑл – кадетсем хатӗрлесси. Виҫӗ ҫул хушшинче вӗсен йышӗ лицейра 7 кадетран 38 ҫитрӗ. Иртнӗ ҫул лицейран тухнӑ 7 кадетран 4-шӗ вӑй структурисен вӗрентӳ заведенийӗсене вӗренме кӗчӗ те ӗнтӗ.

Муркаш лицейӗнчи кадетсем ЧР Вӗрентӳ министерстви ирттерекен пӗтӗм мероприятисене хутшӑнаҫҫӗ, республикӑри кадетсенчен чи пултаруллисем шутланаҫҫӗ. Кадетсене вӗрентес ӗҫре право сыхлавӗн никӗсне районти шалти ӗҫсен пайӗн пуҫлӑхӗ Е. Плечов, ҫар службин никӗсӗсене – Муркаш тата Элӗк районӗсен ҫар комиссарӗ В. Буклаков ертсе пыраҫҫӗ.

Пурнӑҫ хӑвӑрт улшӑннӑ май паян акӑлчан чӗлхине пӗлни тата компьютерпа туллин ӗҫлеме пултарни малти вырӑна тухнӑран акӑлчан чӗлхине тарӑнрах вӗрентме пуҫларӑмӑр. Ку ӗҫре пире Оскар университечӗн акӑлчан чӗлхине вӗренмелли учебникӗсемпе ӗҫлени пысӑк пулӑшу парать.

Лицей паян республикӑри тӗрлӗ аслӑ вӗрентӳ заведенийӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлет. И. Ульянов ячӗпе хисепленекен Чӑваш патшалӑх университечӗн преподавателӗсем пирӗн лицеистсене вӑл е ку предмета тарӑнрах та тӗплӗнрех вӗрентме пирӗн пата килсех ҫӳреҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Чӑваш патшалӑх педагогика университечӗпе те ӑнӑҫлӑ ӗҫлесе пыратпӑр. Шупашкарти 2-мӗш номерлӗ лицейпа тата кооператив институтӗпе те тачӑ ҫыхӑнура эпир.

Лицеистсем пирӗн тӑрӑшулӑха йышӑнса мал туртӑмлӑ вӗреннине тӗрлӗ олимпиадӑсем уҫӑмлӑ кӑтартаҫҫӗ. Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче пулнӑ предмет олимпиадисенче кӑна тӑхӑр 1-мӗш вырӑн, вун пӗр 2-мӗш вырӑн, икӗ 3-мӗш вырӑн йышӑнтӑмӑр.Чӑваш чӗлхипе иртнӗ республикӑри олимпиадӑра та пирӗн вӗренекен 3-мӗш вырӑн йышӑнчӗ. Ку ҫеҫ те мар, И. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗ 10–11-мӗш классем хушшинче иртнӗ «Наукӑна – пӗр утӑм» олимпиадӑра виҫҫӗн 3-мӗш вырӑн, «Пуласлӑха – пӗр утӑм» олимпиадӑра виҫҫӗн – 1-мӗш вырӑн, иккӗн 2-мӗш вырӑн, иккӗн 3-мӗш вырӑн йышӑнчӗҫ. Республикӑри наукӑпа практика конференцийӗнчен те пирӗн вӗренекенсем иккӗн 2-мӗш вырӑнпа таврӑнчӗҫ. Кадетсем пирки калас пулсан, республикӑри кадетсен виҫӗ конкурсӗнчен те пирӗннисем 1–2-мӗш вырӑнсемпе таврӑнчӗҫ. Ӳсӗмсен списокне татах та тӑсма пулать. Ҫакна ҫеҫ палӑртмалла: пирӗн лицеистсемпе кадетсем пур конкурссенче те малти вырӑнсенче пулни «Муркаш лицейӗ» вӗрентӳ учрежденийӗнче ачасем пӗлӳ илесси тивӗҫлӗ шайрине кӑтартса парать. Ҫакна упраса хӑварса ӑна малалла аталантарасси – пирӗн умри тӗллев.

Ачасем паян вӗренӳ процесӗнче компьютерсемпе туллин усӑ курни, ҫӑмӑллӑнах Интернета тухма пултарни умри тӗллевсене хӑвӑрт алла илме пулӑшасса шанатӑп.

**Н. СМИРНОВ,**
**лицей директорӗ.**

## Ӑслӑ ачасене – пӗр йыша



– Пурнӑҫ мана тӑтӑшах ҫӗннине шырама хистесе пынӑ, – тет лицей уҫнӑ вӑхӑтра район администрацийӗн пуҫлӑхӗ пулнӑ **Валерий Иванович Вязов.** – Кунҫул уттинчен юлни вара вилнипе пӗрех. Ҫапла вара хам район администрацийӗн пуҫлӑхӗнче ӗҫлеме пуҫласан шкулсенчи пысӑк интеллектуаллӑ ҫамрӑксем тӗлӗшпе тимлӗх сахалрах пулнине туйса илтӗм. Ҫавӑн чух ҫуралчӗ те ӗнтӗ И. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗпе пӗр пулса пултаруллӑ ачасене пӗрле пуҫтарса Муркаш лицейне ҫул парасси. Ҫак ӗмӗте пурнӑҫа кӗртнӗ ҫӗрте вӑл вӑхӑтра район администрацийӗн вӗрентӳ пайӗн ертӳҫи пулнӑ В. Васильев, «Ёлочка» ача сачӗн заведующийӗ А. Никитина, лицейӑн пӗрремӗш директорӗ пулнӑ С. Григорьев пысӑк ӗҫсем туса ирттерчӗҫ.

Пӗрлехи тӑрӑшулӑх харама каймарӗ: 1999 ҫулхи сентябрӗн 1-мӗшӗнче Муркаш лицейӗ хӑйӗн пӗрремӗш вӗренекенӗсене йышӑнчӗ. Пӗрремӗш олимпиадӑсенчех вӗсен пуҫламӑш ӳсӗмӗсене куртӑмӑр. Ҫакӑ эпир тӗрӗс ҫул ҫинче пулнине ҫирӗплетрӗ, вӗрентӳ системинчи ҫӗнӗлӗхсене шыраса вӗсене анлӑрах пурнӑҫа кӗртме ыйтрӗ. Ҫапла турӑмӑр та. Ҫулсем иртнӗҫемӗн ҫак хум вӑйлансах пычӗ, лицее вӗренме килес текенсен йышӗ те анлӑланчӗ, вӗрентӳ программисем те улшӑнчӗҫ, кӑткӑсланчӗҫ, интересленчӗҫ. Ҫак ӗҫсене туса ирттерме лицейра вӗрентекенсене Чӑваш патшалӑх университечӗн преподавателӗсем пысӑк пулӑшу пачӗҫ. Лицейран вӗренсе тухнӑ пӗрремӗш кӑларӑм 100 процентпех аслӑ вӗренӳ заведенийӗсене вӗренме кӗчӗ.

Районти вӗрентӳ процесӗнче пурнӑҫа кӗртнӗ ҫӗнӗлӗхӗн пӗрремӗш утӑмӗсене тунӑранпа сисмесӗрех 10 ҫул иртсе кайрӗ. Ҫак хушӑра Муркаш лицейӗнче ӑс пухнӑ ҫамрӑксем аслӑ вӗрентӳ заведенийӗсенче тивӗҫлӗ пӗлӳ илсе района таврӑнчӗҫ. Вӗсем паян районӑн экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫне аталантарас ӗҫри ҫирӗп сыпӑк. Ҫакна вӗсен аслӑ юлташӗсем кулленех курса тӑраҫҫӗ.

Паянхи лицеистсемпе кунтан вӗренсе тухнисем тата вӗрентекенсем, ҫак тытӑмра ӗҫлекенсем! Сире пурсӑра та лицей 10 ҫул тултарнӑ ятпа саламлатӑп. Эсир Муркаш лицейӗн ятне район тулашӗнче те ҫӳллӗ шайра тытасса шанса тӑратӑп.

## Йывӑрлӑхсене ҫӗнтертӗмӗрех



Вӑл вӑхӑтри район администрацийӗн пуҫлӑхӗ В. Вязов лицей уҫасси пирки сӑмах пуҫарсан, ку ҫӗнӗлӗх питӗ йывӑррӑн пурнӑҫа кӗрсе пычӗ. Паян ҫеҫ калама ҫӑмӑл, анчах вӑл вӑхӑтра «Солнышко» ача сачӗпе Спорт ҫуртне пӗрле усӑ курса лицей йӗркелес тесен ача сачӗн хӳтлӗхне тӑнӑ ашшӗ-амӑшӗсен ҫырӑвӗпе икӗ хутчен те «Российская газета» хаҫат ҫине тухрӑмӑр. Пӗр вӗренӳ ҫулӗ лицей класӗсем Муркашпа Мӑн Сӗнтӗрти вӑтам шкулсенче ӗҫленӗ хыҫҫӑн ку ҫителӗксӗррине ӑнланса 2000 ҫулта «Ёлочка» садикре реконструкци ӗҫӗсем пуҫларӑмӑр. Ашшӗ-амӑшӗсем, лицеистсем тата спонсорсем пулӑшнипе ҫак ӗҫсене ҫур ҫулта вӗҫлерӗмӗр. Сентябрӗн 20-мӗшӗнче лицей хӑйӗн ҫуртне кӗчӗ.

Нумай районти лицейсем хупӑнчӗҫ пулсан, 2000 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн1-мӗшӗнчен хамӑр лицее муниципаллӑ вӗрентӳ учрежденийӗ туса хунипе (райбюджетран укҫа-тенкӗ килме пуҫларӗ) эпир сыхланса юлтӑмӑр.

Лицей уҫсан ҫулталӑкранах пирӗн ачасем районти, республикӑри предмет олимпиадисенче 50-55 призлӑ вырӑн ҫӗнсе илчӗҫ. Ҫакӑ лицее вӗренме пырас текенсен йышне те ӳстерчӗ: пӗр вырӑна 5-6 ачаччӗ ун чухне.

Муркаш лицейне 4 ҫул ертсе пытӑм. Туслӑ коллектив йӗркеленчӗ кунта. Вӑл туслӑх паян та лицее малалла аталанма пулӑшать. Ҫавӑнпа та лицейран тӗрлӗ ҫулсенче вӗренсе тухнисене, паян кунта ӑс пухакансене, лицейра ӗҫлекенсене уяв ячӗпе саламлатӑп, ырлӑх-сывлӑх, телей, ӑнӑҫу сунатӑп.

**С. ГРИГОРЬЕВ.**

## Лицей асран тухмасть

Ӗнер кӑна-ха эпир шавлӑ лицеистсемччӗ. Паян вара вӑл кунсем – инҫетри ачалӑхра. Апла пулин те хамӑра пурнӑҫра ҫиччӗ виҫсе пӗрре касма вӗрентнӗ тӑван лицейра пӗрле вӗреннӗ тантӑшсем, хамӑра ӑс-тӑн парассипе вӑхӑтне шеллемен учительсемпе воспитательсем пирӗн асран тухмаҫҫӗ. Вӗсем калаӑ сӑмахсем, вӗрентнисем, канаш панисемпе сӗнӳсем пирӗншӗн паян та пӗлтерӗшлӗ. Час-часах аса илетпӗр эпир вӗсене. Аса илетпӗр те ҫулсем иртнине пӑхмасӑрах хамӑра лицейри пек туятпӑр.

Мӗн пур ырри паян пирӗнпе пӗрле. Тавах Сире, пире малашлӑха хӑюллӑн пӑхма вӗрентнӗ учительсем! Тавах Сире, яшлӑх ҫулӗсенче уроксем хушшинчи тӑхтавсенче выляма пӗрле чупнӑ тантӑшсем! Пурсӑра та – юратнӑ лицей 10 ҫул тултарнӑ ятпа тав сӑмахӗ.

Паян эпир, хамӑр суйласа илнӗ профессисене алла илнисем, тӑван ҫӗршыв аталанӑвӗшӗн, юратнӑ Муркаш ен мал туртӑмлӑхӗшӗн вӑй хуратпӑр. Кунӗпех ӗҫре пулсан та юратнӑ лицей, унта ирттернӗ кунсем, ҫӗнӗ юлташсемпе лицейри учительсем асран каймаҫҫӗ.

**Лицейран тӗрлӗ ҫулсенче вӗренсе тухнисен ячӗпе Э. ГАВРИЛОВ, О. ТЕРЕХИН, Т. СЕРАФИМОВА.**

## Вӗсем – малтанхисем



*Лицее тӗрлӗ ҫулсенче ӑнӑҫлӑ вӗренсе пӗтернисем – паян район илемӗ. Вӗсенчен пурте пурнӑҫра хӑйсен вырӑнне тупнӑ. Маларах вӗренсе тухнисенчен Руслан Иванов, Наталия Аргандеева, Марина Чекалова, Татьяна Никольская паян Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче ӗҫлеҫҫӗ. Паянхи сӑн ӳкерчӗкре эсир лицейран 2006 ҫулта вӗренсе тухнисене куратӑр.*

## Района таврӑнаҫҫӗ



«Муркаш лицейӗ» муниципаллӑ вӗрентӳ учрежденийӗнчен малтан вӗренсе тухнисем района таврӑнса Муркаш ен аталанӑвӗшӗн вӑй хума та пуҫларӗҫ ӗнтӗ: кам ачасене вӗрентет, кам саккун сыхлавӗнче вӑй хурать, кам производствӑна ҫӗнӗлӗхсем кӗртессипе тимлет. Анчах, кирек ӑҫта пулсан та, ӗнерхи лицеистсем пӗрре пуҫӑннӑ ӗҫе вӗҫне ҫитермесӗр чарӑнмаҫҫӗ, ҫӗнӗлӗхсене алла илмесӗр лӑпланмаҫҫӗ. Эсир **сӑн ӳкерчӗкре** куракан Ольга Николаевна Яковлева Муркаш лицейӗнчен 2002 ҫулта вӗренсе тухнӑ. Хыҫҫӑнах пуян пӗлӳпе Чӑваш патшалӑх университечӗн юридици факультетне вӗренме кӗме заявлени панӑ. Аслӑ шкулти 5 ҫул та хӑвӑрт иртсе кайрӗ. Алла юрист дипломне илнӗ хӗр Муркаша таврӑнать те район судне судьяна пулӑшаканӗ пулса ӗҫлеме вырнаҫать. «Пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тухма тарӑн пӗлӳ панӑшӑн Муркаш лицейне чӗререн тав тӑватӑп. Кунта вӗренекенсене те, вӗрентекенсене те ӑнӑҫу сунатӑп», – терӗ Оля ӗҫрен самантлӑха пушаннӑ вӑхӑтра.

**А. БЕЛОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**